Районăн Акатуй уявĕнчен

# Хĕрӳ ĕç хыççăн пĕрле савăнар, ĕç çыннине туллин чыс тăвар

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Паян акнă-лартнă культурăсене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерессипе ĕçсем анлăн сарăлчĕç. «Ударник», Ильич яч. хис., «Восток», «Герой», «Свобода», Суворов яч. хис., «Оринино», Чкалов яч. хис. хуçалăхсен уйĕсем уйрăмах пысăк тухăç шантараççĕ. Тырă-пулăн çĕнĕ тухăçĕшĕн уйрăмах тимленисем хушшинче – вун-вун çĕр ĕçченĕ. Çак тараватлă ĕçре кăçалхи çур акире «Свобода» хуçалăхри Николай Петрович Максимов, «Оринино» хуçалăхри Николай Иванович Гурьев, «Ударник» хуçалăхри Алексей Васильевич Михайловпа Сергей Иванович Иванов, Чкалов яч. хис. кооперативри Болеслав Николаевич Никитин тата ытти механизаторсемпе уй-хир ĕçченĕсем пысăк тимлĕх кăтартрĕç.



Муркаш райповĕнчи Нина Соколован ирлесех шашлык хатĕр.



Хăнасем те тавар туянакансемшĕн тăрăшаççĕ.



Мăн Сĕнтĕрти кулинари магазинĕн ĕçченĕсем Г. Кольцова, Л. Майченко, Т. Галкина уявра тăрăшуллă пулчĕç.



Пулас чемпионсем.



Ярославка ял тăрăхĕн тĕп специалист-эксперчĕ Н. Сорокина тыр-пул ăнса пуласса шанать.



Паянхи ачасем – чăвашăн ырă йăли-йĕркине сыхлакансем.



Карусель – Акатуй илемĕ.

Юлашки çулсенче районта хресчен (фермер) хуçалăхĕсем аталанма пуçлани те район çыннисем çĕр ĕçĕ çине тимлĕх уйăрни пирки калать. Паян хресчен (фермер) хуçалăхĕсен харпăрлăхĕнче 3,6 пин гектара яхăн çĕр. Кăçал вĕсем пĕлтĕрхинчен 850 гектар ытларах акса хăварма мехел çитерчĕç. Кунта уйрăмах Александр Иванович Толстов, Виталий Владимирович Горбунов, Владислав Валерьевич Бархаткин фермерсен ĕçĕ курăмлă.

Çĕр ĕç кăтартăвĕсем малтуртăмлă пулнине выльăх-чĕрлĕх отраслĕн экономика утăмĕсем те çирĕплетсе пыраççĕ. Çакна районти обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас тапхăр ăнăçлă вĕçленни те ĕнентерет. Кăçалхи 5 уйăхра çулталăк каяллахинчен сăвăм 1,6 процент ӳснĕ, аш-какай туса илесси 92,2 процентпа танлашнă. Паян ĕне пуçне талăксерен 15-17 килограмм сĕт сăвакан «Герой», Суворов яч. хис., «Свобода», Ильич яч. хис., «Оринино» хуçалăхсем – выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче хăйне евĕр малашлăх туртăмĕн чиккисем.

Мăйракаллă шултра выльăха талăксерен ӳт хуштарассипе Чкалов яч. хис. (676 грамм), «Оринино» тата Суворов яч. хис. (606-шер грамм), сыснасене самăртассипе «Ударник» (468 грамм) тата «Оринино» (458 грамм) хуçалăхсен кăтартăвĕсем ыттисемшĕн аталану тĕслĕхĕ пулса тăраççĕ.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ӳсĕмлĕ ĕçĕ те вăй хурса, çĕнĕлĕхсене ала илсе ĕçлесен – йывăрлăхсем парăннин чăнлăхĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен паттăрлăхне иртнĕ кунсенче ĕнесене машинăпа сăвакан операторсемпе ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерекенсен республикăри конкурсĕнче район чысне хӳтĕленĕ Валентина Александровна Максимовапа («Ударник» хуçалăх операторĕ çамрăксем хушшинче 1-мĕш вырăна тухнă), «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн техник-осеменаторĕ Валентина Алексеевна Леонтьева (3-мĕш вырăн) тепĕр хут çирĕплетрĕç.

Районта килти хушма хуçалăхсем аш-какай производствин 70 процентне ытла йышăнаççĕ пулсан, сĕт рынокĕнче – 79 процент. Районти мăйракаллă шултра выльăхсен 17974 пуçĕнчен 12045 пуçĕ тата сыснасен пĕрре-виççĕмĕш пайĕ килти хушма хуçалăхра вырăн тупнă. Вĕсемпе ĕçлессинче ял çыннисем ял хуçалăх кредичĕпе анлăн усă кураççĕ: çĕнĕ сарайсем тăваççĕ, ăратăсене лайăхлатаççĕ, çĕнĕ йышши апат-çимĕç туянаççĕ, техника илеççĕ. Çаксем йăлтах ял хуçалăх прдукцине ытларах туса илме çул уçаççĕ, ял çыннисен пурнăç шайне ӳстереççĕ.

Ял хуçалăх производствине аталантарнипе пĕрлех ялсен сăнĕ тĕпрен улшăнни те пиртен аякра тăрса юлаймасть. Ку ĕçре ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем активлăх кăтартаççĕ: Муркаш (Н. И. Никитин), Мăн Сĕнтĕр (Г. П. Мазиков), Уйкас Янасал (В. И. Егоров). Ялсен яталанăвĕнче ял старостисен тӳпи те пĕчĕк мар. Ку ĕçре Исетерккĕ ял старостин Альбина Васильевна Степанован, Нискассинчи Галина Петровна Моисееван, Милютакассинчи Владимир Леонидович Хлебниковăн, Уйкас Хачăкри Олег Григорьевич Захаровăн, Çеçмерти Владимир Петрович Ильинăн ырă тĕслĕхĕсенчен вĕренмелли нумай. Акатуй сцени çинче çĕр ĕçĕнчи ăстасен, ял аталанăвне пысăк тӳпе хывакансен пысăк ушкăнĕ Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотисене, ĕçре ырăпа палăрнисем район администрацийĕн дипломĕсене, обществăлла пурнăçри хастарлăхпа палăрнисем «Единая Россия» партин районти уйрăмĕн политканашĕн Тав çырăвĕсене тивĕçрĕç.

Çĕр ĕçченĕсем пирки калаçнă чух ĕç династийĕсем çинчен асăнмасăр та иртме çук. Вĕсем – ял хуçалăхĕнчи ĕçченсен ырă тĕслĕхĕ. Акă «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăри Цветковсен, «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Пушкинсен, «Свобода» хуçалăхри Беловсен династийĕсем çавăн пеккисенчен пĕрисем.

Районта нумай ачаллă çемьесем те чылай. Вĕсенчен нумайăшне Акатуйра чысларĕç. Амăшĕн капиталне илекенсемшĕн те, çак кун çемье çавăракансемшĕн те кăçалхи Акатуйра хăйсене чыслани нумайлăха асра юлĕ.

Район çыннисем пушă вăхăта епле ирттерни ял тăрăхĕсем Акатуя тăратнă ал ĕç выставкинчен те аван курăнчĕ.

Хăйсен пурнăçĕнчи пушă вăхăта спорт аталанăвне уйăракансем çак кунхи шăрăх çанталăка пăхмасăрах кĕрешĕве тухрĕç. Акатуй курма пынисем хаваспах волейболла вылякансен, Муркашпа Шупашкар хушшинчи боксерсен матч тĕл пулăвне, кĕрешӳçĕсен ăмăртăвĕсене, турник çинче ăсталăх кăтартакансен номерĕсене курса киленчĕç. Волейболла выляссипе «Моргаушрайбыт» командине çитекенни пулмарĕ. Ярапайкасси ял тăрăхĕнчен килнĕ «Дружба» – иккĕмĕш вырăнта. Оринин ял тăрăхĕн команди – виççĕмĕш. Кĕрешӳçĕсем хушшинчи тĕп призшăн (така) питĕ хĕрӳ кĕрешӳ иртрĕ. Акатуй парнине вара район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ В. Федотов тивĕçрĕ. Бокспа матч тĕл пулăвĕ интереслĕ иртрĕ пулсан, турник çинче туртăнса турник тавра çаврăнакансен кĕрешĕвне куракансем те йышлă пулчĕç. Кунта малти вырăнсене И. Воробьев, В. Сергеев, В. Иванов тивĕçрĕç. Михĕпе кĕрешекенсем патĕнче те куракансем йышлă пулчĕç.

Кăçалхи Акатуйра халăхăмăр йăли-йĕркине сыхлассипе 1-мĕш хут «Нарспипе Сентнер» программа иртрĕ. 9 ял тăрăхĕнчен килнĕ çамрăксен 9 мăшăрĕ кĕвентепе шыв йăтасси çăмăл мар иккенне, хăйсем хушшинчи хутшăнăва юрласа-ташласа пĕлтерме май пуррине т. ыт. те ăнăçлă кăтартрĕç. Кунта малти вырăна Хорнуй ял тăрăхĕнчен килнĕ Антонина Михеевапа Михаил Железнов тивĕçрĕç. Иккĕмĕш вырăнта Йӳçкассисемпе Уйкас Янасалсем, виççĕмĕшсем – Муркашсемпе Чуманкассисем. Ильинкăсем те куракансемшĕн хăйне евĕр парне пулчĕç.

Çак кун Акатуя пынисем «Муркаш районĕ: иртни тата паянхи», «2009 çул – çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ» фотовыставкăсемпе, ял тăрăхĕсем илсе тухнă халăх творчествин ăстисен ĕçĕсемпе, ачасем хатĕрленĕ теттесемпе савăнсах паллашма пултарчĕç.

Сцена çинчи художество пултарулăх коллективĕсен уяв номерĕсене пăхакансене те хамăр артистсен ӳсĕмĕ куç умĕнчех ӳсни савăнтарчĕ.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен суту-илӳ магазинĕсем Лантăш уçланкинче Акатуй уявне пухăннисене техĕмлĕ шашлыкпа, вĕри апатпа сăйларĕç.

Пĕр сăмахпа каласан, Акатуй район çыннисемшĕн чăн-чăн пысăк уяв пулчĕ. Паян вĕсем çанă тавăрсах «симĕс ĕç çине» кӳлĕнеççĕ. Апла пулсан кĕрхи тулăх кĕрекене пуçтарăниччен!

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Акатуй ялавне çĕклеме тивĕç пулнисем: «Ударник» хуçалăхра 22 çул тракторпа ĕçлекен С. Ивановпа Ильич яч. хис. хуçалăхри В. Егоров механизатор.



Ĕç династийĕсен пуçлăхĕсем Юрий Николаевич Цветков («Сундырь-Хлеб» ООО тĕп инженерĕ) тата Виктор Александрович Пушкин («Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ).



Мăн Сĕнтĕр райповĕ «Финанспа экономика ĕçне-хĕлне çӳллĕ шайра йĕркелени» республика конкурсĕнче те, республикăри экономика ăмăртăвĕн 1-мĕш квартал кăтартăвĕсемпе те 2-мĕш вырăна тухнă.



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Йӳтĕркассинче пурăнакан Нина Геннадьевнапа Александр Валерианович Матвеевсен туслă та пуян çемйи. Мăшăрсем иккĕшĕ те «Свобода» хуçалăхра ĕçлеççĕ.



Оринин ял тăрăхĕн специалист-эксперчĕ С. Михайлова ял çыннисен ĕçĕпе паллаштарать.